Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

7 (7752) № * Юн кун, 2010 ҫулхи февралĕн (нарăс) 3-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

В.В. Путин Чăваш Енре пулнă май

## Хăйĕн ăнăҫăвĕн вăрттăнлăхĕсене уҫса панă

Январĕн 25-мĕшĕнче ĕçлĕ визитпа Чăваш Енре пулнă май, Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Владимир Путин, РФ вĕренӳ тата наука министрĕ Андрей Фурсенко тата Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетне ҫитсе курнă.

Вĕренӳ заведенийĕн пĕрремĕш хутĕнче хăнасене пултарулăх коллективĕсем – Ҫветуй Татьяна кунне халалланă мероприятисене хутшăнакансем кĕтсе илнĕ. Раççей Правительствин Председателĕ халăх пултарулăх коллективĕн ĕçне-хĕлне пысăк хак панă. Калаҫура вара Владимир Путин спорт общество пурнăҫĕнче пысăк вырăн йышăннине палăртнă.

Кайран РФ Правительствин пуҫлăхĕ студентсемпе тĕл пулнă, вĕсене интереслентерекен ыйтусене сӳтсе явнă. Кунта интеллектуаллă харпăрлăха сыхласси те, отечествăлла автопрома аталантарасси те, спорта пулăшу парасси те, наци чăтăмлăхĕ те, ытти ыйтусем те. Республикăри студентсен пĕрлешӳĕн представителĕсем В.В. Путина хăйĕн ӳсĕмĕн вăрттăнлăхне уҫса пама ыйтнă. «Енчен те ку е вăл ҫитĕнӳсем пирки калас пулсан, вĕсем пĕтĕмпех Тăван ҫĕршыва юратнипе ҫыхăннă»,– хуравланă вăл.

Калаҫу пĕр сехет ытла тăснă. Университет студенчĕсене интереслентерекен ыйтусем хушшинче республикăра наукăпа тĕпчев центрĕсем туса хурасси, Раççей аслă вĕренӳ заведенийĕсен дипломĕсене чикĕ леш енче шута илесси, 2014 ҫулта Сочире иртекен хĕллехи Олимп вăййисене хатĕрленес ĕçсене студентсене хутшăнтарасси. Тĕл пулура ҫавăн пекех Раççейре ĕç биржин пĕрлехи информаци системине туса хурасси пирки те ыйтусем пулнă.

Кайран студентсен скверĕнче Раççей Премьерĕ Шупашкар хулинче пурăнакансемпе курнăҫнă.

**Хамăр инф.**

**ҪЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2010 ҫулхи март уйăхĕнчен илсе тăма ҫырăнтараççĕ. Апла пулсан почтальонсемпе паян-ыранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Яланах пĕрле пулар!**

Февралĕн 2-мĕшĕ – Раççей Ҫар Мухтавĕн кунĕ

## «Ҫамрăклах вăрҫа лекнишĕн ӳкĕнместĕп»



***Февралĕн 2-мĕшĕ Ҫар Мухтавĕн кунĕ шутланать. Сталинград патĕнчи ҫапăҫусенче нимĕç фашисчĕсен ҫарĕсене ҫапса аркатнăранпа 67 ҫул ҫитрĕ. Ҫак хаяр ҫапăҫура паттăрлăх кăтартнисем вара паян та пирĕн хушăра пурришĕн савăнмалла. Вĕсем – Муркашри А.К. Капитонов тата Юнкăри Г.Н. Илугин. Ĕнер хисеплĕ ветерансене районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуҫлăхĕ Н.П. Петрова район пуҫлăхĕн Тав ҫырăвĕсене парса чысларĕ.***

**(Вĕҫĕ 2 стр.).**

***Сăн ӳкерчĕкре: Н.П. Петрова А.К. Капитонова саламлать.***

Район администрацийĕнче

## Ҫивĕч ыйтусене пăхса тухрĕç

Тунти кун район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Чи малтанах Юрий Александрович Чăваш Республикин Президенчĕ ҫумĕнчи муниципаллă районсен пуҫлăхĕсен канашĕн ларăвĕ, унта палăртнă задачăсем ҫинче чарăнчĕ. Иртнĕ эрнере ял тăрăхĕсен район пуҫлăхĕ ҫумĕнчи канашĕн ларăвĕ те пулчĕ. Унта пăхса тухнă ыйтусенчен пĕри – ҫĕнĕ урамсене электрификацилесси. Юрий Александрович ку енĕпе ĕçлекен программа ҫулталăка пынине, ҫак хушăра районта ялсенчи 48 ҫĕнĕ урама электричество кĕртме ĕлкĕрмеллине, ку енĕпе ял тăрăхĕсем ĕçленине палăртрĕ. Юрий Александрович район администрацийĕсем иртнĕ ҫулта тунă ĕçсене пĕтĕмлетни пирки те каларĕ. Планеркăра вара патшалăх пушар хурал надзорĕн ертӳҫи И.Н. Смирнов иртнĕ ҫулта тунă ĕçсемпе паллаштарчĕ. 10 пин ҫын пуҫне тухнă пушарсем шучĕпе пирĕн район республикăра чи лайăххи пулнине палăртрĕ.

Район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ, ял хуҫалăх пайĕн ертӳҫи В.К. Ананьев ял хуҫалăхĕнчи ĕçсемпе паллаштарнă май районта паян кашни ĕнерен талăкра вăтамран иртнĕ ҫулхи ҫак вăхăтринчен 1,2 кг сĕт ытларах – 11 килограмм ҫурăна яхăн сунине палăртрĕ. Ку кăтарту Суворов ячĕ. хис., «Оринино», Ильич ячĕ. хис. хуҫалăхсенче 16–13 килограмран та иртет.

Планеркăра ҫанталăк улшăнса тăнине пăхмасăр, пурăнмалли ҫурт-йĕрпе коммуналлă хуҫалăх объекчĕсем йĕркеллĕ ĕçленине палăртрĕç. Район пуҫлăхĕн ҫумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳҫи А.Е. Андреева кăçал февралĕн 20-мĕшĕнче районăн 2009 ҫулхи социаллă пурнăҫĕпе экономика аталанăвне пĕтĕмлетессине халалланă уяв Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче иртессипе ҫинче, халăхри пек каласан, район кунĕн программи ҫинче тĕплĕн чарăнчĕ.

Планеркăра ҫавăн пекех районти спортăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе йĕркеленĕ ассоциацисен представителĕсен, район тата республика хаҫачĕсен редакторĕсен канашлăвне ирттерес ыйтусене пăхса тухрĕç. Ҫавăн пекех район администрацийĕн пайĕсем информресурссемпе епле ĕçленине пĕтĕмлетрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

Райадминистрацире

## Пултаруллисене – Хисеп грамоти

Граждансемпе юридици вăйĕнчи предприятисен саккунлă интересĕсемпе прависене хӳтĕлес, районти граждансен право культурине аталантарас ĕçе тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн район администрацийĕн пуҫлăхĕн 2010 ҫулхи январĕн 12-мĕшĕнчи 1 № йышăнăвĕпе ЧР Муркаш нотариус округĕн нотариусне **Павел Иванович ШЛАЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Комисси ларăвĕнчен

## Ыйтусем ҫук мар

Январĕн 29-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен пĕчĕк залĕнче ведомствăсем хушшинчи кризиспа кĕрешекен комиссин ларăвĕ иртрĕ. Ăна уҫнă май район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов бюджета укҫа-тенкĕ пухăнасси чакнине палăртрĕ, ҫак йывăрлăхран тухмалли майсем ҫинче чарăнса тăчĕ.

Кунпа пĕрлех ҫитсе килекен суйлав пирки те манмалла мар. Ку вăл политикăпа ҫыхăннă. Ăна ирттерме те укҫа-тенкĕ кирлĕ пулать. Ял ҫыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне анлăн туса пымалла, суйлава тивĕçлĕ шайра ирттерес пулать.

Ĕç рынокĕнчи кăткăслăха чакарассипе йышăннă республика программине иртнĕ ҫул мĕнле пурнăҫлани пыни тата ку тĕлĕшпе кăçал умра тăракан задачăсем пирки районти ĕçпе тивĕçтерекен центр директорĕ Т.А. Антонова каласа пачĕ. Япăх ĕçленĕ теме ҫук. Программăпа пăхса хунă ĕçсене пĕтĕмпех пурнăҫласа пултарнă, уйăрса паракан укҫа-тенкĕпе туллин те тĕллевлĕн усă курнă.

Ҫапах та мĕн тунипе кăна ҫырлахмалла мар. Кăҫалхи задачăсем те пĕлтерĕшлĕ те анлă. Вĕсене пурнăҫа кĕртессипе ҫак кунсенчен тытăнсах ҫине тăрса ĕҫлеме тытăнас пулать. Ларура палăртнă тăрăх, ку е вăл тĕллевпе уйăрса паракан укҫа-тенкĕпе усă курассине кайри вăхăта хăвармалла мар.

**(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).**

Кун йĕркинче

## Пухусем ҫывхараççĕ

***Малашлăха пăхакансем иртнĕ ҫулхи ĕçсене пăхса тухса тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем турĕçех тесе шутлатпăр. Апла пулсан кĕçех хуҫалăхсен отчет тата отчетпа суйлав пухăвĕсем пуҫланмалла. Мĕн ҫине ытларах тимлĕх уйăрмалла паян ҫĕр ĕçченĕн, мĕнле ыйтусем пухусен кун йĕркине пулмалла? Ҫак ыйтусем ҫине хурав ыйтса район хаҫачĕн сотрудникĕ район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ, ял хуҫалăх пайĕн ертӳҫипе В. К. АНАНЬЕВПА тĕл пулнă:***

– Районăн тĕп тытăмĕ ял хуҫалăх отраслĕ пулнăран эсир асăннă отчетпа суйлав пухăвĕсен тапхăрне эпир питĕ кăсăкланса кĕтетпĕр. Ҫак пухусенче хуҫалăхсен малашлăх утăмĕсем палăрмалла-курăнмалла. Халĕ каланине шута илсе ял хуҫалăх производство кооперативĕсен, ытти харпăрлăх формиллĕ хуҫалăхсен специалисчĕсемпе ĕҫченĕсен пĕрлехи пухура иртнĕ ҫул мĕн туса ҫитерейменнине туллин те уççăн пăхса тухмалла. Перспективлă калаçăва тавлашуллă сăмах-юмах айне туни никамшăн та вырăнлă мар. Манмалла мар, ҫĕршыври ҫĕнĕ экономика хутшăнăвĕсенче ĕлĕкхилле ĕçленин малашлăх ҫук. Ҫавăнпа та хуҫалăхсен пухăвĕсенче туса ҫитерейменн ĕçсене экономикăн ҫĕнĕ ҫулĕсем ҫине куçарасси пирки ҫиччĕ виççе калаçни пурне те ытларах усă парасса эпир шанатпăр. Малтанлăха палăртнă тăрăх, пĕрремĕш пуху ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуҫалăх производство кооперативĕ-заводра февралĕн 10-мĕшĕнче иртмелле.

**А. БЕЛОВ** калаçнă.

Ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен канашĕн ларăвĕнчен

## Ҫине тăрса ĕçлемесĕр май ҫук

Ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен район пуҫлăхĕ ҫумĕнчи канашĕн январĕн 29-мĕшĕнче иртнĕ ларăвне район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ. Малтанах налуксем пухас ыйту кăткăслăхĕ ҫинче налук инспекцийĕн пуҫлăхĕ А.А. Волков чарăнса тăчĕ. Хальлĕхе налуксем пухăнасси тивĕçлĕ шайра теме ҫук. Иртнĕ ҫул итогĕсем те ҫавна ҫирĕплетеççĕ. 2009 ҫулта ҫĕр налукне 333 пин тенкĕ, пурлăх ҫине хуракан налука 200 пин тенкĕ, транспорт налукне 633 пин тенкĕ пуҫтарса ҫитереймен. Кăçал та кун пек лару-тăру туxса ан тăтăр тесен, халех конкретлă мерăсем палăртас пулать.

Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуҫлăхĕ Н.П. Милютин район территорийĕнче хăрушсăрлăха тивĕçтермелли ыйтусене хускатрĕ. Хальлĕхе ун пек пысăк инкексем район территорийĕнче пулман. Апла пулин те ҫакă лăпланса лармаллине пĕлтермест. Ял тăрăхĕсенче гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе кăçал пурнăçламалли ĕçсен планĕсене туса хатĕрлес пулать, ответлисене палăртмалла, вĕсене ҫирĕплетмелле.

Пушар тухас хăрушлăха сиресси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку тĕлĕшпе ятарлă памяткăсем хатĕрлени пăсмасть. Вĕсене ял ҫыннисем хушшинче валеçмелле. Ку е вăл лару-тăрура мĕн тумаллине кашниех пĕлтĕр.

Муниципаллă пушар хуралĕн службисене йĕркелесси пирки сăмах-юмах пĕрремĕш кунах мар ĕнтĕ пырать. Ял тăрăхĕсем хушшинчи пушар хуралĕсене йĕркелесси пирки нумай калаçнă. Апла пулин те лав вырăнтан тапранни сисĕнсех каймасть.

2009 ҫулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ «Об ускоренной электрификации новых улиц (населенных пунктов) в Чувашской Республике» 99 № Указ йышăнчĕ. Ăна пĕр ҫултаlăкlăха кăна йышăннă. Ҫавăнпа та ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен васкаварлăрах пулни кирлĕ. Проектсене хатĕрлесе экспертиза витĕр тухма ĕлкĕрес пулать. Кун пирки район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли ҫуртйĕрпе коммуналлă хуҫалăх управленийĕн тĕп специалисчĕ А.Ю. Скворцов чарăнса тăчĕ.

Район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуҫлăхĕ А.Е. Андреева Аслă Отечественнăй вăрçăра Ҫĕнтерӳ тунăранпа 65 ҫул ҫитнине тивĕçлипе кĕтсе илессипе районта ирттерекен тата малашне пурнăҫламалли ĕçсем пирки чарăнчĕ.

**(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).**

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă юратнă аннене – Мăн Тутаркасси ялĕнче пурăнакан **Вера Анатольевна АДАМОВАНА** февралĕн 3-мĕшĕнче 55 ҫул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, ихсĕлми телей, вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Пурнăҫу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăҫланчăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕ, кинĕ, 2 мăнукĕ.**



Поздравляем заслуженного механизатора ЧР **Энгельса Григорьевича ГРИГОРЬЕВА** с 75-летием. Желаем крепкого здоровья и долгих лет жизни.

**Коллектив СХПК им. В.И. Чапаева.**



Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, ырă кăмăллă асаттене, кукаҫине – Ярославка ял тăрăхĕнчи Ҫĕн Чемей ялĕнче пурăнакан **Владимир Николаевич МАРКОВА** нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 60 ҫулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Ырă кăмăлпа, тулли те ҫирĕп сывлăхпа, пуян кĕрекепе, хисеплĕ ҫемйӳпе, мăнукусемпе тата тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр санăн хисеплĕ кануна.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 6 мăнукĕ тата тăванĕсемпе тус-юлташĕсем.**